Пиҫет кунне асӑнса тухат.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем пӗрлешӗр!

# КАПКӐН

9-мӗш № МАЙ 15-мӗш 1928-мӗш ҫул.

— 4-мӗш ҫул. тухат. —

## Пиҫет ӗҫне ӗҫлекенсем




ӗ ҫ р е.

# Ăнман кĕрешӳ.

Саттиpă.

Терентти Макçăмç, уçрештеви пуç-лăхĕ, пайан саçаттирен пит çилессĕн таврăнçĕ. Каллех тем пулнă ĕнтĕ. Пĕлсех тăр вара: ун пек усалланса тавăрăнни мĕне те пулсан пĕлтеретех. Анçах, майне пĕлмесĕр, пĕр сăмах та калас пулмасť ытлашши: Терентти Макçăмç хаç çавăнтах урса кайма пултарать. Темскер, халиççен питех асăрхаман çир тытса пăрахаť ăна. Пĕр пукане пек хитрə арăмĕ тăрăшни çеç тăвăл пĕлĕтне айăккалла иртерсе йараť. Ой, çак тăвата çул хушши пу-рăнса, Марйа Иванăвнă хăй упăшкин характĕрне пĕлмеллех пĕлсе çитнĕ çав!.. Терентти Макçăмç акă, йăвăр портфĕлне çырмалли сĕтелĕ çине пă-рахса, паçттуне пăтана çаксассăн, аçисене те, арăмне те ним çĕнмесĕрех, апат хушшине кĕрсе ларçĕ. Ахаçрен, усси шăтса тухакан ырăнне пĕтĕркелерĕ. Марйа Иванăвнă çасрах çимел-лисем кăлара-кăлара параť ун умне: тутлăран тутлăраххине, пылакран та пылакраххине. Çи, мăнтăрлан çав йу-ратнă упăшка!.. Терентти Макçăмç çавăнтах тата, тем çигменнине кăтарт-са, куçĕсене сиввĕн çалăштарса илет. Ах, маннă кайнă, ан çилен, тесе аçаш-ланă пек пулаť хĕрарăм сасси те, сĕтел çине пуçламан сăра путылкки пырса лараť. Ку—апат умĕн кашни кун антармалли портси. Терентти Макçăмç тинех ĕнтĕ хырăм ыйтнине пĕтĕм кă-мăлтан пама пултараť. Анçах... халех кансĕрлеме пур пĕр йурамасť ăна. Хăй çĕнме пуçламасăр пур пĕр мал-тан çĕнмелле мар. Хăйех вăл ак усăл-са кайаť. Карçĕ кăна çиттĕр. Çăнах та, çапла пăртак ларсан-ларсан, тулма пуçланă хырăмĕ тăрăх малтанхи хут шăлкаласа илсессĕн, пуçлăх пукан çумне кайалла кайса ӳкет. Хăй тĕллĕ-нех вара пĕрре хыттăн хайăрса кăла-раť.

— Шшшаййттан-се-е-м!! тет.

Марйа Иванăвнă кăна илтмен пекех иртерсе йараť. Унăн кун пек çух хайĕн ăрасна тактĕккă (майĕ) пур. Иккĕмĕшĕнçе, виççĕмĕшĕнçе тин сăмах уçма хăйса çитнĕ лек тăваť вăл. Терентти Макçăмç, хăйне хирĕç ларакан арăмĕ ним каламасăрах иртерсе йанине кура, тата хытăрах хайăрттараť акă:

— Шшшай-йт-тан-сем!!

— Мĕн пулнă тата пайан? Камсене вăрçатăн ес капла?-

— Шшшайттансем!.. Каллех çырнă вĕт ман çинçен хаçатра.

— Ăçта? Мĕн тесе çырнă? Ах, пĕр-ре тапăнма тăрсассăн, пĕрнех тапă-наççĕ вара. Мĕнле йытăлла етемсем пур-ши...

— Ав, портфĕлре: илсе вула упăшку çинçен.

Марйа Иванăвнă мĕскĕн упăшки хутне кĕрсе сăмахсене вĕриленсех ка-лаť. Портфĕл ăшĕнçен хаçат нумĕрне вăр-вар туртса кăлараť те, йĕрĕнсе пекле вуласа тухаť унта çаптарнă саметкăна. Кореспотент çыраť мĕн: Çапла, çапла, пирĕн пуçлăх Терентти Макçăмç, çавна хăй йуратман пирки кăларса йарса, ун ырăнне урăххине, шăл-çеммине илнĕ... Ик-виç хут компенсатсисем парса ратсионалисатсине пурнăçа пит „аван" кĕртет... Наклат-лă расхутсем пĕр уйăх хушшинçех 500 тенкĕ пуçтарăннă... Тата Терентти Макçăмç, йала комантировккăна кай-сассăн, вилес пек ӳсĕрĕлсе, йурласа, алхасса çӳренĕ. Аван пуçлăх. Тата кам пурши кун пекки?

—Кл... ле-ве-т-та. Пĕтĕмпех кл-ле-вет-та çаптарнă. Ку мошшеннĕке... Çыраканнине ыранах сута паратăп. Ретактăрне хăйне те ответ тыттаратăп. Çерр-тти!..

Терентти Макçăмç, ăшçикки ытла хускалса кайнипе, ура çине сиксе тăçĕ. Пусăрăнмашкăн кĕтесрен кĕтесе каллĕ-маллĕ шаклаттарса çӳрет. Айалти хут-ра пурнакансем те шăпах пулçеç: çӳлте йепле тăвăл пуçланса кайнине итлеççĕ пулас. Марйа Иванăвнă, тут-лă апатне çиме пăрахсах, шурă кăмака çумнелле кайса тĕртĕнçĕ.

— Мĕн уçрештени ăшне кӳртетĕн ес çав темскер кореспотент... çăвисене? Мĕн ĕç вĕсенĕн.—тесе тарăхмаллах тарăхаť йĕркесĕрлĕхсене тӳсме пулта-райман хĕрарăм çунĕ.

— Ах, Маçă!—тет ăна çавăнтах

# Хӑнаран таврӑннӑ ђухне.



— Хӑта, ђӗрттерха.

Терентти Макҫӑмђ.—Пӗлмесӗр персе йаратӑн ҫак есӗ: хамӑр уђрештенирех пурха ун пекки... Ҫавах пулмалла-ха. Ҫав аппаланаҡ вӑл елеклес ӗҫпеле. Ӑна-а...

— Кӑларас та йарас пулаҡ. Мӗн пӑхса тӑмалла.

—Пра-вӑ!.. Тем елеке ҫапаҫђен, малтан ун пирки парткомра-и, йе ӗҫтӑвкомра-и калаҫса килӗшмелле. Килӗшни вӑл ретакси?.. Иураҡ-и пысӑк ӗҫрисене ҫавӑн пек еретсӗр варалама? Шшшайтансем, шшшайтансем. Пӗтӗм хаҫата пӑсаҫҫӗ.

— Апла пулсан, ҫырса та илес пулмасҡ ӑна. Мӗн тӑвас вӑл хӑрӑк йапалапала укса пӗтерсе.

Терентти Макҫӑмђ ку тӗлте ђӑнах та ҫав ырӑ шухӑша кайнӑ пек пулђӗ.

— Тӗрӗс те калатӑн пуђ есӗ, Маҥӑ... Пӗрремӗш ђисларан пӑрахатӑп ҫырса илме.

Авђах,—ой, усал инкеке!—тепӗр уйӑхран Терентти Макҫӑмђ ҫинђен 3-мӗш хут ҫаптарвӑ.—Хаҫат илме пӑрахнӑ, тесе ҫырнӑ хаҫхинђе. Ҫав майпа ҫӳлти хутри хватгерте ку кун каллех тӑвӑл пуҫланма тӑђӗ. Ҫапӑх та нумайа пымарӗ хаҫ. Ђасах лӑпланђӗ. Арҫын сасси йулашкинђен ҫапла кӑна каларӗ:

— Мана паллаҫҫӗ, аван мар. Есӗ, Маҥӑ, ыран кайса памӑшши малаллишӗн потпискӑ укҫине. Хӑтӑлас пӗрех хут кусенђен, терӗ.

Марйа Ивачӑвнӑ тепӗр кунне, ђӑнах та 9 сехетрех ретакси кантурне карӗ. Терентти Макҫӑмђ, темскер йатлаҫкаласа, тем пек тӑрӑшса ӗҫлесен те пур пӗр хисеп ҫукки ҫине кӑтартса, хӑй уђрештенинелле пит хӑмӑррӑн уттарђӗ. Леш „елеклесе" ҫыракан корреспотентне хаҫ те сута памаҥха вӑл, анђах хайне таҫта пӗрик хутђен те ђӗнтернӗ пулмалла. Ҫапла пӗтрӗ Терентти Макҫӑмђӑн малтанхи ӑнаҫҫӑр кӗрешӳвӗ. Мӗн пулӗ-ши малалла тата?

ХУММА ҪЕМЕНӖ.

## Суйа сӑмах.

— Хӑш ђухне суйни те кирлӗ пулаҡ те, суйма вӗренеймерӗм ҫав. Вӗрентха мана суйма?

— Епӗ отђогсем ҫыраканни мар?

## Йуратакан.

— Есӗ арӑмна йуратса илтӗни ҫак?

— О, пит йуратса... арӑм ҫупҫине.

# Пан҃кка, Ваҫкка, тата Ван҃кка.

— Охо хо-о-ох!—тесе йывӑррӑн сывласӑ йаҭӗ Сыпахат йалӗнҭи комсомол йаҭейккин ответлӑ ҫекреттарӗ.

— Ех-ех-е-ех! терӗ тата ун самеҫтиттелӗ.

— Мӗн кура-а-ас! терӗ тата тепри —пўро ҭленӗ пуҫне ҫӗрелле ҭаксе,

Райкомолтан хут килнӗ. Пиҭет кунӗ ҫывхарса килнӗрен майӑн 5-мӗшӗнҭен пуҫласа кашни комсомол йаҭейккинех хаҫатсем ваҭҭи ҫӗнӗ потписҭӗксем тупса памалла. Сирӗн йаҭейккӑ,—тенӗ йулашкинҭен ҫырура,—нимĕн те ӗҫлемест. Ку таранҭен те есӗр райкомол хушнӑ ӗҫе пӗрне те пурнӑҫа кӗртсе курман. Ҫавна кура сирӗн йаҭейккӑ халӗ тата револҭутси вунпӗрӗмӗш ҫул ҫине куҫнӑ пулсан та, хресҭенсем умӗнҭе авториттетсӑр. Йаҭейккӑ ӗҫлемен пиркийех сирӗн йал ӗлӗкхи пекех тӗттӗм, хаҫат-тавраш ҫук. Малашне те, пиҭет кампанинҭе те потписҭӗксем тупса параймасан...

— Охо-хо-о-о-х! терӗ тата вӑрӑмрах сывласа ҫекреттар.

— Ехх!—терӗ татӑклӑ самеҫтиттел.

— Мӗн кура-а-а-а-ааас! — тесе хурлӑхлӑн йурласах йаҭӗ пўро ҭленӗ.

Шӑп. Ахлатма, йурлама ҭарӑнҭӗҫ. Ыслӑк хуйхӑ килсе пуснӑран малтан пӗри хуҭӗ пуҫне хурал пўрҭӗн сӗтелли ҫине, унтан тӗпри, ун хыҫҫӑн тата виҫҫӗмӗшӗ...

Хуйхӑ сасси илтӗнменрен шӑнасем вӗҫсе ҫўреме пуҫларӗҫ. Унтан ишӗлнӗ кӑмака хыҫӗнҭен шӑршисем сиксе тухрӗҫ, таҫта, пӗр кӗтесре шӑрҭӑк йурласа йаҭӗ.

— Охо-хо-о-ох!—пуҫне илсе ҫӗклерӗ ҫекреттар. Туй тума пуҫланӑ шӑршисем шӑтӑксене кӗрсе тарҭӗҫ. Шӑрҭӑкӗ йурлама, шӑнисем вӗҫме ҭарӑнаҫҫӗ. Пӗрре хуйхӑллӑ куҫӗсене уҫса пӑхаҭ те ҫекреттар, йулташӗсем ҫаплах хуйхӑрса выртнине кура, вӑл та пуҫне паҫӑрхи пекех сӗтел ҫине хураҭ.

Шӑршисем каллех шӑтӑксенҭен тухса туй тума пуҫлаҫҫӗ. Шӑрҭӑкӗ йурлама пуҫлаҭ, шӑнисем вӗҫме тытӑнаҫҫӗ.

— Хӑрр-хӑр-хррр! сасартӑк сӑмсапа йурласа йараҭ ҫекреттар. Ун хыҫҫӑн пўро ҭленӗ сӑмсапах шӑхӑрма, самеҫтиттелӗ тӗлӗкпе аташма пуҫларӗҫ.

Хӗвел анса ларма патне ҫитнӗ. Хурал хапхинҭен суха туса тавӑрнакансем йала кӗреҫҫӗ.

— Айта, тӑр, Ваҭкка, тӑр!—терӗ самеҫтиттелӗне.—Каҫ пулнӑ, вон сухаран та тавӑрнаҫҫӗ, айтӑр, апат ҫиме...

Ваҭккала Ваҫкка тӑраҫҫӗ.

— А, ес хӑҫан вӑранма ӗлкӗрнӗ вара, Паҭкка?

— Ак, хаҭ анҭах, суха калекӗсем сас панине илтӗр̆ӗм те, вӑрантӑм. Айтӑр кайатпӑр...

Паҭкка, Ваҭкка, тата Ваҫкка хурал пўртӗнҭен тухаҫҫӗ.

— Ну, хӑҫан хаҫат потписҭӗкӗсем пуҫтарӑпӑр ӗнтӗ,—тет ҫекреттар.

— А, хӑҫанни... ыран килсе ларӑпӑр ак, ҫакӑн пек,—теҫҫӗ лешсем.

— Ой, хырӑм выҫнӑ ман,—тет ҫекреттар ҫӗре сурса.—Ҫӑвар тўпи, темӗскер, тутлӑмарланса кайнӑ.

— Манӑн та пит выҫнӑ ҫав,—тет самеҫтиттел.—Анне тем пӗҫернӗ ӗнтӗ пайан: те ҫу йашки, те какай...

— Темлеха,—тесе хушса калаҭ пўро ҭленӗ,—аттесем сухаран тавӑрӑнман пулсан, апатне халех ҫитермӗҫха ҫав...

— Ниҭҭево,—тет ҫекреттар, — ак, ыран пайанхи пек тумӑпӑр. Кашни хӑй ваҭҭи апат илсе килӗпӗр...

— Вот, лайӑх!—тесе савӑнса ўкеҫҫӗ самеҫтиттелӗпе пўро ҭленӗ.—Ес мӗн илсе килен Паҭкка?

— Еп ҫакӑр илсе килетӗп.

— Еп какай!

— Еп ҫу!—пӗрпӗринҭен хӑвӑрт каласа йараҫҫӗ Ваҫкка, тата Ваҭкка.

Унтан пӗрпӗринҭен уйӑрӑлса килӗсене кӗрсе кайаҫҫӗ. В.

---

## Сысна хӑй йурринех йурлаҭ.

Ик҃ усламҫӑ ерех умӗнҭе калаҫса ларсаҫҫӗ. Хаҫат вуланӑ вӗсем. Килӗшмест вӗсене нийепле те хаҫатра ҫырни.

— Усламҫӑсене лапҭӑтсах пӑрахасшӑн. Ҫакӑнса вилесси ҫеҫ йулҭӗ ӗнтӗ. Ӑна ан ту кӑна ан ту, ҫӗрӗк йапала ан сут, шӑршлине ан тыт, илекене тарасапа ан ултала, хакла ан суг.

— Тӗнҭе пӗтет пулӗ, тетӗп епӗ... пӗтерсех хурасшӑн, укҫа тупакансене йуратмаҫҫӗ ҫав вӗсем. Т.

# Ретколлеки отҕоҕĕ умĕн,

## Й Е

## Пирĕн ҫтена хаҫаҕĕсем.




— Мĕн тăван?
— Никама таҫан кала. Пĕлтĕрхи ҫтена хаҫатне кăҫалхи йатпа кăларатăп.

# Соломон ҫӗлхипе ҫырнӑ ҫирккуҫар.

Ҫуркунне. Хӗвел хӗртсе пăхаҫ. Кантраҫҫипе Макҫăм, пӗр ушкăнлă хуҫалăх ҫленӗсем, урамра выртакан пӗрене ҫине ларҫӗҫ те, тапратрӗҫ йумаха кăҫалхи ҫураки кампанине йепле иртересси ҫинҫен.

— Кăҫал колхоссен сиесӗ те пулса иртнине илтнӗҫҫӗ, ҫуркунне те сăмса патнех килсе тăҫӗ, ҫапах та пире ҫураки кампанине йепле иртермелли ҫинҫен никам та пӗр сăмах шарлани пулмарӗ. Манса кайманши пирӗн колхоса, Макҫăм?

— Манасса манман пулӗ те-ха, Кантраҫҫи муҫи,—нумай пулмасҫ Шупашкарти акроном килсе кайрӗ, манас пек каламарӗ ун ҫухне. Ҫураки кампанине йепле иртермелли ҫинҫен килнӗ таврăнсанах ҫирккуҫар ҫырса йама пулҫӗ ун ҫухне, кӗтесех пулаҫ ӗнтӗ ҫырккуҫара, атту вӗсем каламан пек тусан, тем хупса та хурӗҫ, терӗ Макҫăм кăсийинҫен тапак хугаҫҫи туртса кăларса, кивӗ кӗнеке хутӗнҫен пӗр пирускăлăх ҫӗрсе илҫӗ те.

Макҫăм пирускине те ҫӗркесе ӗлкӗреймерӗ, ҫав вăхăтрах урама пиҫмонотсă васкаса пынине курах кайрӗҫ пирӗн колхоҫнӗксем.

— Путех хайхи ҫиркуҫара илсе килет пулӗ ку Мӗкӗге, терӗ Кантраҫҫи муҫи, хайсем йеннелле сулăннă пиҫмоностсă ҫине пăхса.

Мӗкӗте кусем патне ҫитрӗ те, сумкинҫен пӗр хут кăларса паҫӗ Макҫăма.

Макҫăм конвертне ҫурса унтан пӗр машшинăпа ҫапса ҫырнă хут туртса кăларҫӗ. Пӗр листă пирускă хуҫӗ ҫине пӗтӗмпех машшинапа ҫапса тухнă.

Ку хута курсан Кантраҫҫи муҫи савăнса кулса йаҫӗ.

— Ну, Макҫăм, ҫасрас вуласа тух та, тавай пирускă ҫӗркес ку хутран, хуҫӗ пит аван, терӗ Кантраҫҫи.

Макҫăм малтан хуҫӗ хăҫан тухнине пăхрӗ. Хутне март уйăхӗн 7-мӗш кунӗнҫе ҫырнă иккен Шупашкар хулинҫен. Хутăн нумӗрӗ 946. Унтан тыгăнҫӗ Макҫăм вулама:

„Предстоящая весеняя посевая камнания в жизни колхозов приобретаст исключительно важное значение. Отсталость сельского хозяйства в нашей Чувашреспублике, ниские урожаи, мизерная оплата труда и в связи с ничтожным темпом роста товарности нашего сельского хозяйства властно диктует нам, чтобы мы с горячим рвением, **с ентузиазмом** провели эту кампанию».

— Ах, мур илес йапала! Вырăсла ҫырнă иккен, ҫăвашла ҫырнă пулсан епӗ те пӗлнӗ пулăттăм мӗн ҫырнине. Мӗн ҫырнă унта, Макҫăм шăллăм?

— Кунтине ăнланаймарăмха, тен малашне ҫырнине ăнланăпи, тет Макҫăм; хăй тин ҫеҫ мунҫаран тухнă пек тарласа кайнă.

Малалла вулаҫ: «основаыми задачами . . . . . . **форсированное развитие товарных** отраслей **сельского хосяйства** . . . . . . . **максимального использования** . . . . . . . . **„Кубня“ обеспечивает рентабельный совет** . . . . **контрактировать** . . .

— Кунта, Макҫăм шăллăм, сана та асăнnă иккен. Мӗншӗн йатлаҫҫӗ тата? Маҫҫăм, тапӗҫ, тракгир тенӗ никак унта. Кӗркунне Вăрнарта пивнойра тапӗлшҫӗкпе пӗрле икӗ литтăр сăра ӗҫнине систернӗ пулмалла мӗнле те пулсан хăйамаҫӗ.

Вулаҫ Макҫăм малалла „просьба **информировать** колхозсекцию в каждые 1-го и 15-го числа с указанием вопросов в проведении которых требуется наша помощь“.

Вуласа пӗтерҫӗ Макҫăм, йулашкинҫен алă пуснине пăхрӗ. Ҫи кайран алă пусаканни „Инструктор—акроном Никиттӗн“ пулнă иккен.

— Уф! тэсе кăкăр тулли сывласа йаҫӗ Макҫăм пӗтӗмпех вуласа пӗтерсен.

— Ну, мӗнле? Пурне те ăнлантăни? тет Кантраҫҫи.

— Ăнланнаймарăм та, ăнлама та кирлӗ пулас ҫук. Ку хута пирӗншӗн ҫырман пулмалла, пирӗн колхоса йăнăшпа килнӗ пулмалла вăл хут, мӗншӗн тесен пирӗн патра килнӗ акроном Петров йатлăҫҫӗ, кунта алă пусаканни Никиттӗн йаглă. Тин ҫеҫ ҫак хутпа пирускă туса туртатпăрах сарăлса, терӗ Макҫăм савăнса.

Ҫапла вара колхосҫексийӗнҫен килнӗ ҫыркуҫара пирускă туса туртса йаҫӗҫ колхоҫнӗксем. С—к,

# Крылов паçнисем халђхи вăхăтра.

## Акăш, рак, çăрттан.

Акăшпа рак, тата çăрттан
Пĕр лав туртма тытăннă:
. . . . . . . . . . . .
Ракĕ ђакаť кайалла,
Акăш вĕçет çӳлелле,
Çăрттан ђăмаť кӳлелле.
Туртаç, туртаç виççĕн тан—
Сикмес те лав вырăнтан.

„Капкăн ресођутсийĕ: Комиççи суйлăр! Унсăрăн ĕç тухмасť.

## Ентипка сăкманĕ.

Пурлă çуклă сăкманне
Кулĕн-çĕрĕн тăсваран.
Ик ђавси те кĕркунне
Татлнă кайнă Ентипкан.
Тепри ĕнтĕ пускилрен
Саплăк кайса илĕђĕ,
Ие хăй çĕле пĕлмесен,
Саплаттарсах килĕђĕ.
Ку пускиле çӳремен,
Çĕвĕçе те тилмĕрмен.

„Капкăн“ ресођутсийĕ: Крылов муђи аташаť: пускилре мар, копператтивра та халĕ саплăклăх тавар тупаймăн.

## Шăрђăкпа кăткă.

Тринки-тринки сикекен
Шăрђăк тусăн йурласа
Çу иртни те сисĕнмен.
Пăхаť калла çаварăнса—
Кĕр те иртнĕ, хĕл çитет...

Капкăн ресођутсийĕ: Вăхăта йурласа çеç иртернĕ пулин те, отђотне çырма пĕлĕха.

## Сăнама йуратакан.

— Слона куртăни есĕ?
Пăхма мĕнле пек курăнаť?
Сăрта çитсе çапăннăвах
Туйăнђĕ пуђ вăл сана?
— Слон унтађђи мĕн вара?
— Çавăнтађĕ çав, йулташ!
— Каçар еппин, ырă çын:
Слона астуман та еп.

«Капкăн» ресођутсийĕ: Кураймăн ĕнтĕ слонсене. Комантировккăра—та вĕсем.

# Отпускра.

Карт вăйине пĕре вĕренсен пĕрахма хĕн.



Траккапа Пракка картла выђаса выртнă çĕре хăрушă крокотил (çын çийекен тискер кайăк) çывхарса пынă.



Крокотил çăварĕнђе те Пракка картне пăрахман.



Крокотил ăшĕнђе те картла выђасах ларнă.

---

## Ăс пани вырăнлă пулнă.

— Мĕнле пурăнатха санăн ывăлу—хвершăлта пурнаканни?

— Пит лайăх. 10 пин тенкĕ выђаса илнĕ.

— Аха!.. Еп ăс пани вырăнлă пулнă иккен. Хвершăл пек тупăшлă вырăн сахал, тесе пĕре мар епĕ сана калани.

пулăсене тытма ҫармалли прикка-са такçанах кăлармалла.

Ёлĕк: пулă кураймана шӳрпе, тенĕ, халĕ: пулă кураймана шăрши, тетпĕр.

### Сивĕ йапала.

— Шывра копператтив тав-рашсем пурши?

— Пулмасăр. Ёнер епĕ пит сивĕ пулă тытрăм. Копператтив прикашҫĕк пулнă ĕнтĕ вăл сивĕ-скер.

Вăлта—ӳсĕр çынсен сăмахĕ. Вĕсем çав сăмах çумне урăх сăмах-сем те хушаççĕ, сăмахран: вăл та ĕçет, пирĕн ма ĕçес мар, теççĕ...

### Ашшĕ пекех.

— Манăн та пулă тытмалла выҫас килет.

— Малтан сайавлени пар.

### Пулăшаť.

Хресҫен: Ну, мĕнле? Сана ывă-лу пулăшаťи?

Пулăçă: Пулăшакан пулҫĕ. Ёнер пĕрле атма сутса ĕçрĕмĕр.

## Пулли çыртмасť, хакĕ çыртаť.



Пирĕн пулăçăсем.



— Шыва путаť туртса кăларăр!

— Ӳсĕрскер вăл. Саккускă шыраť.

### Кам ăçта пулă тытма йуратаť.

Пуп—пăтранҫăк кӳлĕре.
Хула çамрăкĕсем—пуҫварта.
Ёçекен—тирĕк çинҫе.
Копператтив прикашҫăкĕ— каткара (çын кураҫҫен).
Пулăçă—йут çын тетеллинҫе.

## Ретаксийе килнĕ çыру.

Ретакси йулташ!

Епĕ, шампа пулă, çыратăп çыру ретакси йаҫĕпе. 10 çул ĕнтĕ есĕр манăн йата çĕртсе пыраттăр. Мана пуппа танлаштараттăр. Малалла пуппа пĕр хушаматлă пулас теместĕп. Пупа совет çыннисем йуратмаççĕ, мана йуратаççĕ (пуринҫен ытла ĕçнĕ ҫухне йуратаççĕ). Хушамата улăштаратăп. „Хĕрлĕ шампа“ тейĕр малалла мана.

Хам хӳремпе ал пусатăп: Шампа.

### Тройскире.

Пуп (йурлаť): Ей, христос турă!.. Есĕ пулăçă çынсене пит ăслă тунă...

Хресҫен: Пулăçă пулăçа катаранах кураť çав.

**КИМĔ** сутатпăр Шупашкар пыҫҫăкĕнҫе ишме. Пулăçăсене катса паратпăр. Атрĕс: „Капкăн“ ретакси.

**КАМ** вилмелли амаҫ шыраť,— Тунтикассинҫе Иехрем лавкинҫе пулă илĕр!

## Шăршлă пулă тавар хакне йӳнетме пулăшаť.

# ПУЛĂÇĂ СТРАНИЦИ

## Умĕнхи статйа.

Çын çырăнса илнĕ „Капкăна“ вулама йуратакансем пиртен: мĕншĕн «Пулăçă странитси» кăларатха «Капкăн», капкăнпа пулă тытма май çукĕçке? тесе ыйтĕç.

Тепĕр уђрештени сайавлени памасăр, сайавлени çине кĕрповăй марккă çыпаçтармасăр ответ памаст. Епĕр ыйтакансене çав тери аппалантармасăрах ответсем паратпăр. Итлĕр!

Тĕрĕс мар есĕр шухăшлани. «Капкăна» пулăсем те, хўрисем пур пирки, пĕре мар—ђылай çакланкалаççĕ. Мăн хырăмлă шампа, империалисăм аккулли, ђăмма йуратакан çăрттан, йăпăлка пулă-йăпăлти, шыв пулли çатăлти, çĕлен пулă, шапа, çын йатне йышăннă партас пулă, тата ыттисем те „Капкăн“ муçейĕнђе ђылай çакăнса тăраççĕ. Вĕсенђен копператтиври пулăсенђен те ытларах шăршă перет. Илес текенсене сутатпăр та, анђах... илекенсем хакĕ пирки шикленерех тăраççĕ: йўнетнĕ тавара илме хăрамалла, теççĕ.

Пулă, пулă, пулă! Ей, пулă!

---

## Çăрттан пулă ђăмах пыраť, кўлли шăнсах пыраť.

---

### Вăлтапа ларнă ђухнехи шухăшсем.

Пирĕн копператтиври пулла ўсĕр çынсем тытнă пулмалла—шăршă перет.

---

Ватă пулăçăсем пулла атмапа тытаççĕ, вăтамрисем — вăлтапа, çамрăккисем—ђĕлхепе.

---

### Пулă тытмалли хатĕрсен словарĕ.

Тетел—икĕ тĕрлĕ пулаť,—пĕрипулă тытмалли, тепри — йурату тетелĕ. Пулă теттеллине ђаста ђасах пулă кĕрет, йурату тетеллине—алимент.

Сĕреке—шапа тытмалли йапала.

Ала—вĕтĕ пулăсем тытмалли. ...

## Шанђăксăр йапала.



Пĕр пулли: Тарăпăр кунтан. Кăçал тунă кĕпер кăçалах ишĕлсе анакан.

---

### Шыва путса вилнĕ пулăçăсенђен ыйтмалли анкеттă.

1. Иатпа хушамату мĕнле?
2. Халиђђен шыва кайса вилсе пăхни есĕ (вилсе пăхман пулсан мĕншĕн вилсе пăхманнине кăтартмалла)?
3. Ху тытнă пулла çисе курни?
4. Аçу-аннў та сан ыйхăлли?

Шыва кайса вилнĕ çынăн ал пусмалли вырăн . . . . . .

### Ăс пани.

Васçилйĕв:

— Тытнă пулă шăршланасран мĕн тумалла?

Хирĕç калани:

— Тытнă пулă шăршланса ан кайтăр тесен, çисе йамалла.

Васли Антрейђă:

— Мĕнле вĕренес пулă тытма?

Хирĕç калани:

— Пулă тытма вĕренес тетĕн пулсан, пулли малтан вăлта ...




## Тухати те тухмасťи... çтена хаçаţĕ?

Кокăţан „Ревисор“ йатлă пйессинţи хула пуçлăхĕ хулана ревисор килес умĕн хăйĕн „слушăшţисене“ çапла калана: 5 çул ĕлĕк епĕ ţирку лартмаллăх хыснаран укçа илнĕţĕ. Ţиркӳне халĕ те лартма пуçламан. Мĕншĕн лартман тесе ыйтсассăн: лартма пуçланăţĕ те, анţах çунса карĕ, теме хушнă. Ţăвашистатра та... Çулталăк хушшинţе çтена хаçаţĕ 1 номĕр кăларнă ретколлеки. Майăн 1-мĕшĕнţе теприне кăларма тытăннă та, анţах кăларма пуçланăскерех „çунса“ кайнă пулмалла.

Кашни çулталăкра пĕрер хут ţĕрĕлсе тăраť çтена хаçаţĕ. Ретколлекийĕ хăçан ţĕрĕлĕши?

## Тухмасан кăларăр.

П—т кĕвĕçет.

Шупашкар районĕнţи Алкешĕври ПСÇЛКС йаţейккин çтена хаçаţĕ февраţ уйăхĕнţе йулашки тухнă, тет.

Йулашки тухнă пулсассăн, ретколлеки текех кирлĕ мар ĕнтĕ. Турţакапа тĕртсе вăратăр та ăна, кăларса йарăр.

## Сана никам та мухтамасť пулсан, ху мухта.

Çемен Верхунов çыраť çыру „Канаш“ хаçат ваţţи. Пит вирлĕ çыру. Акă вăл:

„С. Верхунов Х. Ç. Ш—ра (Шăхасанта) вĕренет. Кунта йала килсен, хурал пӳртĕнţе питĕ хресţен хуçайствине çĕклесси çинţен калаçрăмăр. Вăл пĕтĕмпех аван, ăнланмалла каларĕ. Уна салам, хаçат урлă!!!“.

Саламне каласах пулаť ĕнтĕ „Капкăн“ урлă та пулин. Ţăвашсем салампа пĕрле пĕрпĕр куţţенех йараççĕ, епĕр йĕплĕ çăмах йаратпăр. Çи! Çисем!..

## Йурату тем те тутараť.

Ţутай-касси йалсовет претçетаттĕлĕ хаçат-шурналсене пит хытă йуратаť. Ак мĕн çыраççĕ ун çинţен икĕ йалкор:

Кив-Ţутай-кассинţи йалсовет претçетаттĕлĕ Парамонăв Й., те хăйĕнţен ытларах пĕлекен пуласран, йалсовет йаţĕпе пыракан хаçат-шурналсене, тата комсомол йаţейкки йаţĕпе йанă политкрамăттă кĕнекисене никама та памасť. Теплерен хăйпе майлăраххисене çеç вăрттăн парса йараť, теççĕ.

Парамонăв йулташ, сана „Капкăн“ ретаксинţен вăрттăн йĕплĕ çăмах парса йаратпăр. Никама та ан кала!

## Пулăшăр пулăшкома!

Ах, пулăшком, пулăшком! Есĕ хăв çынсене пулăшатăн, сана кам пулăшĕши?

Уйри-Çертри (Елĕк рай.) пулăшком, ампарти тыррине кайкаласа пăхман та, тырри ампартах кăвакарса кайнă.

Сирĕн пулăшкома хăйне те тасатмалла... формалинпа!

## Патрака кĕршнĕ.

Лапра-кассинţи (Йĕтĕрне р.) Кĕркури Йăванĕ, йалĕçтăвком ţленĕ, тарçа кĕрĕшнĕ.

Мăнкун умĕн çав йалĕçтăвком ţленĕ пуп ваţţи çăмартапа укçа пухса çӳренĕ, тепĕр майлă каласан, пĕţик самооплошепи туса çӳренĕ.

Кĕркури Йăванне „çӳлтиĕçтăвком“ ţленне кĕртес.

Лартăр вăл „çӳлте“, пĕлĕт çинţе.

## Çапла райполитçутком?

Нарат йалĕнţи (Сĕнтĕрвăрри рай.) испаţ „нарат-нараг—нарт“ тесе çӳрет вара кăвакал пек йал тăрăх.

Вăл (Шăнкăрţ Çтаппан Петĕрĕ) мăнкун ернинţе ернипех вуламалли çурта çăрапа питĕрсе усранă. Çынсем кĕрес çукха, унта çăра çакăнса тăраť

тесе шанҫӑклах ҫӳрерӗ пулмалла урам тӑрӑх, тет Лиҫинккӑ.

Шанҫӑклӑ ҫӳремесӗр... Хӑй те шанҫӑклах кӗрсе ӳкрӗ „Капкӑна".

## Сывлама уҫӑ-и?

Ҫӗпӗртен ҫыраҫҫӗ:

Шаҫнӑвккӑ поҫҫолккӑри (Ишшим окрӑкӗ) Леонтти Опришкӑв хӑй комунис пулсан та, сӑмакун аппаратне хӑй тӑваҫ, сӑмакунне те ӗҫме йуратаҫ. Сӑмакун пиҫки ӑшнех кӗрсе ларнӑ, темелле. Иал пуххине ӳсӗрпе кӗрсе кайсан, претҫетаттӗлпе ҫекретiаре: епӗ кам, есӗр ман алрисем, тесе ҫӑпӑҫтарса хураҫ, тет Пӑркӑҫ.

Малалла ӗнтӗ сӑмакун пиҫкинҫе лараймӗ, йӗплӗ ҫӑмах хуранне куҫарса ларгрӑмӑр халӗ ӑна.

## Аҫа вӑййи.

Хӑш ҫухне йалхуҫалӑхне вӗрентекен наукӑ та аҫа вӑйи пулса тӑраҫ.

Шупашкарти петтехнӗккӑм ҫывӑхӗнҫи хӗрлӗ сӑрт ҫуркуннепе ирӗлсе петтехнӗккӑм ҫӳреҫи витӗр кӗрсе, йухмалли йӗкерҫӗ ҫусти ҫӑпаларан ҫатма ҫане йухса сарӑлнӑ пек, ҫӳреҫе йанаххинҫен урайне йухса сарӑлаҫ. Ҫавӑнран хӑтӑлма кӑҫал петтехнӗккӑм йӑвӑҫ лартма 12 тенкӗ илсе, урок вӑхӑтӗнҫех 2-мӗш курсра вӗренекенсене 3—4 сехет хушшинҫе ҫав сӑрта йамра ларттарнӑ. Анҫах, карта тытман пирки, йамрисене вӑл кунах кӑшласа йанӑ каҫакасем пӗтӗмпех.

Каҫакасем те йалхуҫалӑх наукkине вӗренесшӗн. Ак, самана? Ыйтамха сиртен: миҫе йетинитсӑ сирӗн петтехнеккӑмра ӑслӑ ҫын?.

## Аптрал.

Мӗн тӑвас ку уҫрештенире ларакан ҫӑвашсемпе? Те хӗртнӗ уйҫукпа хӗртсе илес ӗнтӗ вӗсене, те кӑвас-ҫӗрес ӑшне лутӑркаса ҫикес? Кӑшт ларсанах, „вота ҫуркунне пот нокам шӗпӗл-шӗпӗл телайӗт" теме вӗренеҫҫӗ.

Вӗркӗҫ йулташ „Канашпа" „Капкӑн" кантурӗнҫен ҫакӑн пек хут илнӗ:

...„Есӗ окҫуна 72 пуса йанӑ 5 мартра кунта пирӗҫ патра ҫитне 10 мартра прихотоваҫ тунӑ квит. № 766, 10 мартрапир март уйхшеҫ уҫмастпӑр"...

Пулаҫ, пулаҫ, пулаҫ,—ир те пулаҫ, каҫ та пулаҫ. 14 хут ир пулса каҫ пулсассӑн, „Капкӑн" тухаҫ, унта каллех хайхи вырӑсланнӑ ҫӑвашсене тӗл пулӑпӑр. Пулаҫ, пулаҫ, татах пулаҫ ун пекки.

## Кӗрешӳ, хӑмпу, тата сӑран хутаҫ.

Пурнӑҫран кайа йулса пыракан ҫынсем, ҫуркунне майак лартнӑ пек, мункунта сурхури тӑваҫҫӗ.

Тикенек ҫыраҫ:

Куславкка районӗнҫя Минкӗш йалсовет претҫетаттӗлӗ Иакку Тимофейӗв апрелӗн 19-мӗшӗнҫе ҫут ҫанталӑка курайми пулаҫҫен ӗҫнӗ те, сурӑх картине кайса йӑваланнӑ (сурӑх ури тыгнӑ). Вӑл самоконккӑ тӑвакан Иелкка матка ерехне пӗтересшӗн ҫаплах ӗҫет. Ӗҫтерекенсене сӑмакунпа тытмасҫ, тет.

Халӗ ӗҫетха вӑл, — хӑмпувӗ сурӑлса кайсассӑн мӗнле кӗрешесха вара Иеллка матки ерехӗпе. Вара самоконпа кӗрешме кайнӑ ҫухне, хӑмпу вырӑнне, сӑран хутаҫ ҫӗклесе каймалла пулаҫ.

## Ҫӗнӗ йала тӑвакансем.

Ӗлӗк пӗр ухмаха, те пупӗ вара, те ерхелийӗ, турра пуҫҫапма хушнӑ, тет те, лешӗ вара ҫамкине ҫапса шӑтараҫҫенех пуҫҫапнӑ, тет. Ухмах вӑл, тепӗр тесен, ҫамкасӑр та пурӑнма пултараҫҫке! Уншӑн хуйхӑрмалли ҫук, анҫах...

Самук-кассинҫе (Шупашкар р.) Май праҫникне иртерекен комиҫҫи Майӑн пӗрремӗшӗнҫе кам ӗҫлет, ӑна 1 тенкӗрен кайа мар штрав тӳлеттермелле тунӑ.

Кам хушнӑши вӗсене капла хӑтланма—те «пупӗ», те «ерхелийӗ», те халӑха ҫӗнӗ йаларан сивӗтме тӑрӑшакан йумӑҫ карҫӑкӗ? Пуҫ уйӑрлса кайсан, алӑсем тем те тума пултараҫҫӗ ҫав (никам хушмасӑрах).



# Хăш-пĕр поетсен шухăшĕпе.

Хăш-пĕр поетсем хăйсен амăшĕсене пĕтĕмпех комсомола кĕртсе пĕтерни. (Криттĕксем каланинҫен).




Комсомолĕс—поет: — Анне йулташ, мĕнле шутласа кăлармаллаши припавăҫнăй стоимоҫа?

88 ҫулти амăшĕ: Вот, ывăл йулташăм, Карл Маркс хăйĕн «Капитал» кĕнекин 1-мĕш томĕнҫи 233-мĕш странитсăра, айалтан пуҫласа ҫӳлеллехи 11-мĕш строккара ҫапла каланă: кăпиталисăм анархиллĕ проиsводствi...

## Литтераттурă мыскари.

(Ҫăваш ҫĕлхипе ҫырнă илемлĕ проиҫветенисен йаҫĕсенҫен тунă шӳт).

«Стантсăра» «Варвари» «Пăхăр ҫĕлĕм» туртакан «Ҫемере Кĕркури» «Хĕнхур айĕнҫе» «Аслати умĕн» ларнине курсан:,, Мĕншĕн? «Мĕншĕн» есĕ, «Хĕрлĕ Шайттан», «Иантрак йантравĕ» пек, «Ҫĕлĕмсĕ йурри» йурласа «Траккапа Праккана», «Укăлҫа кассинҫи» «Аҥукпа Ваҥукăн» «Роман сыпăкĕ» хыҫĕнҫи „Телейсĕр туйне" кăтартмастăн, тенĕ.

«Шишкă» «Иеркĕнĕ»—«Силпи» «Кушарта» «Иантрак Йантравне» «Савни йенҫĕкĕ» тыттарнă, «Пуйан Карука» «Савни парни» панă. «Мĕншĕн?» Ара «Телейсĕр кунсем» сирĕн пирки «Сĕрĕмре» пулҫĕҫ, парăр, «Арҫурисем», «Алимент» темешкĕн ӳлĕм. Ку «Пуҫламĕш». Вĕҫĕ „Сутра". «Ҫирĕм улттăн» ҫвитеттĕлсем. «Силпи» «Ҫĕнтерҫĕ»...

— «Йĕмĕр сакки сарлака», Халĕ «Иуҫҫи хăпарнă вăхăтра» «Траххом йурри» йурласа ҫӳремелле ан пултăр «Иалта», тесе таврăнаҫҫĕ «Леш хайхисем» сутран «Малалла» утса.

# Ҫӗрӗ хаҫат.

Пурӑнвӑ, тет, ҫут ҫанталӑкра пӗр Сӑпани йатлӑ карҫӑк. Хайне пӑхсан, вӑл лутра пӗҫӗкрех, тата хитре мар, курпунлӑ, кукӑр сӑмсаллӑскер пулнӑ. Анҫах вӑл калама ҫук ӑста пулнӑ. Мӗн пур таврари ҫӗнӗ хыпара ҫынсенҫен пӗр икӗ кун маларах пӗлсе пынӑ.

Вӑхӑт иртет те иртет, хайхи карҫӑк ҫаплах вилме шухӑшламасӑ. Утмӑл ҫул пурӑнаӑ, ҫитмӗл ҫул пурӑнса сакӑрвунӑ ҫул ҫине кусаӑ. Иалти ҫынсем унтан тӗлӗне пуҫларӗҫ:

— Мӗн, есӗ, карҫӑк, вилместӗн. Вӑхӑт ҫитрӗ пулмалла е?

Анҫах правӗлӑ кӑтартнӑ тӑрӑх, кашни ҫынӑнах пӗрре, пурӗ пӗр вилмелле. Карҫӑк тепӗртак пурӑнкаларӗ те, вилме хатӗрленҫӗ. Выртаӑ пӳртре пӗр пӗҫҫенех, шурӑ кӗпесем тӑхӑннӑ, ак, ак-ак вилет темелле. Куҫне хупма шухӑшланӑҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах сасартӑк астурӗ:

-- Мӗнлаха капла, епӗ хаҫ вилетӗп. Пускилти карҫӑк пуринҫен малтан йал тӑрӑх кайса, еп вилни ҫинҫен пӗлтерсе ҫӳрӗ? Ҫук, еп ӑна ҫӑтса иртерейместӗп...

Тӑҫӗ карҫӑк, пӗркенҫӗ кӗрӗк, ҫупрӗ урамалла. Ҫӑл кутне ҫитсен кӑштах ҫаранса тӑҫӗ те, шыв ӑсма пынӑ хӗрарӑмсене тӑнлантараӑ:

— Ҫӗнӗ хыпар, илтрӗри есӗр?

— Мӗнле ҫӗнӗ хыпар ҫинҫен каласатӑн есӗ?

— Епӗ вилме хатӗрлентӗм. Выртатӑп, шап-шур кӗпесем тӑхӑннӑ.

— Ой, ҫӑнахах-и?

— Тупата турӑшӑн та, хутте халех куҫ ҫурӑлтӑр. Ара ман мӗншӗн суйа суйас?

Ҫапла, карҫӑк пӗтӗм йала ҫӗнӗ хыпар пӗлтерсе ҫаварнҫӗ те, киле килсе вилмелли ӗҫе пӗтерме выртрӗ. Нимӗн ӗҫ те тухмасӑ, вӑхӑт иртрӗ пулас вилме. Кӑштах выртkаларӗ те, вилӗм килмест. Тӑҫӗ нимӗн пулман пекех. Каллех пурӑнаӑ.

Вӑхӑт нумайах та иртмерӗ—Сӑпани каллех сак ҫинҫе шап-шур кӗпе тӑхӑннӑ выртаӑ. Малтанхи пекех, пуҫларӗ куҫне хупма. Сасартӑк астуса илҫӗ: хам вилнине каласа пӗлтермелле, унсӑрӑн пускил карҫӑкки манран малтан пӗлтерсе тухӗ. Тӑҫӗ ҫак ҫинҫен—тухрӗ урама.

Ҫул хыҫҫӑн, ҫул иртет. Сӑпани карҫӑк ҫаплах ҫӗн хыпарсем илсе ҫӳрет, вилме нимӗнле май та тупаймасӑ.

Сӳре Иӑванӗ.

## Выҫӑх ҫӗрлӗх алла пӑхеӑ.



Хӗрарӑм: Ай ай нумай ӗҫетӗн. Упӑшкана хывнӑ пуҫ есӗ.

# Криттĕк.

— Иван, ҫарăнса тăрха пăртак,— терĕ Петĕр урамăн тепĕр йенҫи траттуар ҫинҫе пыҫҫăк ашса пыракан йулташне.—Пĕрле утăпăр.

Йĕпе ҫанталăкпа Шупашкар траттуарĕсене тарла-тарла вăрҫса пыракан Иван тăҫĕ. Петĕре йуратаҫ вăл. Вĕсем иккĕш йалана пĕрле ҫӳреҫҫĕ. Уҫрештенисенҫе те сĕтеллисем йунашар, ыталанса ларнă пекех лараҫҫĕ. Ĕҫĕсем иккĕшĕн те пысăк ĕҫсем: Петĕрĕн телопроисвотствă та, Иванăн—шутпашутлаканствă...

— Пĕлетĕни, Иван, мĕнскер?—куҫран пăхса калаҫ Петĕр йулташĕпе йунашар утма тăрсан.—Ман пуҫра пысăк шухăш пур. Епĕ—криттĕк пуласшăн... Кун пек пуҫлăхсем умĕнҫе пуҫа ҫиксе ҫӳресе пулмасҫ текех, ытла ҫĕрене йывăр...

— Мĕн тăвас тетĕн вара ес ҫĕрене йывăрлăхран пушатас т е с е н, кама криттĕклесшĕн,—каласа пĕтерме памасҫ Петĕре Иван.—Пуҫлăхсене криттикковаҫ тусан, темле ҫав... такăнса ӳкмелле ан пултăр...

Петĕр ахăлтатса кулса йараҫ.

— Ухмах, мĕн тăватăп еп пуҫлăхсемпе. Пуҫлăхсемсĕр пуҫне урăх криттĕклемелли йапала та ҫуки вара? Ех, ухмах, ухмах ес Иван! Неушлĕ вара ман пуҫăмра пĕр сумлăх ăс та ҫук. Тăрхалла шлепкке шголĕ еп пуҫлăхсене криттĕклеме. Тепĕр тĕрлĕ каласан ман арăм, аҫа пур... криттĕкленĕ хыҫҫăн вара вĕсене ăҫта хурас?!

— Ҫавна каларăм ҫав еп хам та,— тет ăнланса Иванĕ.—Атту, вон, ес... пуҫлăхсем ҫинҫен кала пуҫларăн та...

— Ес ăнланмарăн,—тет тавăрса Петĕрĕ,—епĕ: пуҫлăхсем умĕнҫе пуҫа ҫиксе ҫӳреме йалăхтарҫĕ, терĕм, ҫавăнпа та—криттĕк пулма кирлĕ, терĕм. Анлантăни ĕнтĕ хаҫ?

— Ҫук, Петĕр, темле, ăнланмалла мар калатăн пулмалла ес—ăнланаймастăп сана.

— Ну, ухмах ес, апла пулсан,— ҫиленсе калаҫ Петĕр.—Сана ăнлантарас тесен, сăмахха ҫăмах пек ҫăмласа памалла, ухмах, ес, ухмах!

Ҫапла, ҫипер калаҫса Атăл хĕрнелле ҫывхарса пынă ҫĕртех вăрҫса кайрĕҫ Петĕрпе Иван. Сăмах ҫине сăмах хушса пĕр-пĕрне йуратнă йулташсен уйăрăлса каймалла пулҫĕ. Иванĕ хăйне ухмах тенĕрен ҫиленсе кайса хăвăрт тапранҫĕ те пуҫвар ҫинелле ухса кайрĕ, Петĕрĕ, ăла йулташĕ ăнланмантан тарăхса, ĕҫ ҫукранах пристăҫ ҫине анса кайрĕ.

* * *

Тепĕр виҫ кунтан Петĕрпе Иван ĕҫлекен уҫрештенинҫе профсойус ҫленĕсен пуххи пулҫĕ. Ăшă, хĕвеллĕ кун. Уҫрештенин пысăк ҫӳреҫисенҫен кĕрекен хĕвел пайăркисем унта та кунта ӳксе пĕтнĕ. Пуху пулĕмĕнҫе ҫутă, илемлĕ. Пуху кун йĕркинҫе пĕр ыйту ҫеҫ пулнăран, тата кăмăллă хĕвел тулах ҫĕннĕрен пуху пуҫлăхĕ—местком претҫетаттĕлĕ пухăва халех хупатăп, тесе шухăшласа лараҫ. Ыттисем те ҫавах. Темĕскер ҫинҫен калакан токлатҫĕке итлесех каймаҫҫĕ.—Хаҫ ак, хаҫ Атăл хĕрне ҫупатпăр, тесĕ лараҫҫĕ. А... пайан темшĕн преҫитиум патнех пырса ларнă Петĕр ун пек мар. Вăл пайанхи пухура калама хăй пуҫĕнҫе реҫ хатĕрлет.

Токлатҫĕк каласа пĕтерҫĕ. Пуху пуҫлăхĕ: ну, йулташсем, камăн хушса каламалли, йе мĕн, те, пулса урăххи...

— Ҫук, ҫук! теҫҫĕ харăс пĕр ҫирĕм вăтăр ҫăвар. Пуху пуҫлăхне каласа пĕтерме те памаҫҫĕ.

— Ман пур, ман пур,—терĕ ҫавăнтах Петĕр.—Манăн пысăк уҫрештенинҫи пысăк йĕркесĕрлĕхсем ҫинҫен калас килет...

Пукансем ҫинҫен тăма хатĕрленнĕ халăх, тем, кăшт тĕлĕннĕ пек пулса Петĕр йеннелле ҫавăрнаҫ. Ĕмĕрне те пухусенҫе ҫăвар уҫман Петĕр тӳрех уҫрештенири йĕркесĕрлĕхсем ҫинҫен хыттăн калама хатĕрленни тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерҫĕ вĕсене...

— Йулташсем,—тет малалла Петĕр, —епĕр сотсиалисăм тăватпăр. Анҫах пирĕн ĕҫе такăнтарса пыракансем питĕ нумай. Хăш-пĕр ҫухне епĕр пысăк, ҫăтма ҫук йĕркесĕрлĕхсем курсан та, пуҫлăхсенҫен хăранипе каламасăр тăратпăр.

Пухура шăп. Петĕрĕн ним хăрамасăр калакан сăмахĕсене хăшĕсем сывламасăр итлеҫҫĕ.

— Ҫакăн пек пуҫлăхсенҫен хăраса

тăнипе малашне пирĕн питĕ хытă кĕрешмелле,—хытăран хытă, пысăк ораттăрсем пек аллисемпе хăлаçлансах малалла шатăртаттарат̆ Петĕр,—ун çинђен, ав, Парттин XV-мĕш сйесĕ мĕн терĕ?.. Не вçирайа на литса криттиковат̆ тăвас пулат̆—вот мĕн тенĕ партти сйесĕ...

Тата шăппăнтарах, пĕр тапранмасăр итлет пуху. Кайри кĕтесре ларакан Иван—Петĕр йулташĕ те çаплах тĕлĕнсе хытса кайса итлет.

— Ак, епĕ ĕнтĕ, йулташсем,—малалла калат̆ ораттăр,—епĕ ĕнтĕ, йулташсем, хам кунта пĕр çулталăк ĕçленĕ хушăра темĕн ђухлĕ йĕркесĕрлĕхсем куртăм. Ак, тĕслĕхрен, йулашки кунсенђе пирĕн... пирĕн...—ку тĕлте темшĕн калаймасăртарах тăрат̆ ораттăр, пирĕн стурăш—Йакур туса хунă йĕркесĕрлĕхех илер. Çаплах, хăйне хăй çĕнтерсе каласа хурат̆ Петĕр.—Пăхăрха есĕр пирĕн шăпăр кутне! Унта пирĕн мĕн ђухлĕ çўпçап,—анђах çаплах тасатмаст̆ пирĕн стурăш... Ак, тата куђђăр йĕркесĕрлĕхне илер. Вăл хапхаран тухса кайнă ђухне трантас тенелĕпе йаланах хапха йупине лектерсе хăварат̆. Тенелĕ те хуçăлма пултарат̆, йупи те... Кун пек йĕркесĕрлĕхшĕн мана атте йĕме антарса вĕтеђђĕ, а епĕр...

Малалла Петĕр мĕнле сăмахсем каланине пĕлместĕп епĕ. Сопранинђен тухсан хăмаç пек хĕрелсе кайса, хăвăрт, такна-такна утса «Привет» столовăйне сăра ĕçме кĕрсе кайнине анђах пĕлетĕп.

РСАИ.

## Ула сысна.

Ула сысна пĕрре ирхине,
Те хăйех уçнă хапхине,
Пахђана кĕрсе кайнă инкемек,
Ахаллине те мар, сатлинех.
Авă вăл, мăн кăмăллă хуçа пек,
Мăшлатса çўрет пĕђђенех.
Куђат̆ тăвам-ха, терĕ пуђ çав сысна та.
Ирпеле сатра лайăх ĕнтĕ ђăнах та.
Йăвăçсем çинђе сарă кайăксем
Ир ырлăхне мухтаса йурлаççĕ.
Айалта хĕрĕх те пĕр тĕслĕ ђеђексем
Ырă шăршине парса тăраççĕ.
Акă, хĕвел те çўлтен ђалăшшăн
Сата пырса кĕђĕ йăвашшăн.
Мĕн пур ђĕрĕ ђун савăнат̆:
Сатри те сатра марри те.
Кăтра хурăнăн кăтра çўлçи те
Пăшăлтатса калаçнăн туйăнат̆.
Пирĕн сысна кунта нумайах тăмарĕ.
Çаврăнђĕ те вити йенелле утайрĕ.
— Ну, Хвекле, мĕнле-ха?
Аван пуђ сатра? Тĕрлĕ ђеђек умăнта,
Кайăк йуррисем... йепле ытарса
тухрăнха?—
Терĕ йупах т̆ыха сыснана.
— Ей, суйа! Ним ырри те çук унта!
Тесе хуђĕ лешĕ т̆ыхана.

———

Кун пек Хвеклесем,
Пĕрре икке пĕлменсем,
Етемре те сахал мар.
Ак хăшĕ—мĕн ун Советăн, тет.—
Мĕн унта!
Ку нађар, леш те нађар... Хăй ђăн та
Çак Хвеклерен уйрăм мар.

Н. Ев.

---

## Пуштă йешђĕкĕ.

**Ђĕпĕсене** Тукас шкулĕнђи уђиттĕлнитсă Çерафимă Кăмиссарăвă шкулта кăвакал усрат̆, ађасем тўла тухмалли ырăнта сыснасем усрат̆ пулсассăн, ăна хăйне выђăх картине хупса лартăпăр. Килĕшетĕни?

**Савва.** Асса-кассинђи (Елĕк р.) Шăрђăк Иеххĕмĕ, хĕрлĕ çăмарта тесе, Тарас Самсун арăмĕн пўрнине ђăмласа çăтсах йанă пулсассăн, çыртаймасăр йулнă пўрнисем ăна сута парђђăр.

**Комсомола.** Аслă-Патĕрйелĕнђи вуламалли çурта хаçат-шурналсем нумайтарах килтĕр тесен, мĕн тумалла, тетĕн. Аçунтан ыйт.

**И-н Т.** Ђăваш—Сурăмĕнђи Миххайлăв хуликана сут скамйи çине тытса лартăр. Хуликанла ĕçсем туса çўресе ывăннă пуђ.

**Шыпкине** „Вăтакас—Татмăш (Канаш р.) йалĕнђи комсомолĕс Илйе Т̆аххин сăра тултарнă стакканпа ашшĕ пуçне персе, така пуснă пекех йун йухтарнă“. Маттур! Малашне те ун пек ĕçлесен вăл пĕремĕш преми илме пултарат̆.

**Çилтăвăла** (Сĕнтерваррри р.). Ерçырминђи çтена хаçађĕн ретколлеки ђленĕсене насус пыршипе сапса пăхăр. Вара вĕсем вăранĕç.

**Куснарсене.** Шуп. р. Иван Çеркейĕв Апашри кретит йулташлăхĕнђен выђăх апађĕ илме тесе илнĕ укçапа арăмне пушмак илсе панă пулсан, арăмне пит йуратат̆ еппин вăл. Маттур! Хађхи саманара арăмне пит йуратакан арçын сахал, теççĕ тата хĕрарăмсем Пурçке!

**И-н Т.** Тури-Пантлири (Елĕк р.) хурал сарай йăтăнса аннипе насусĕ айала пулнă, тетĕн. Шел. Насуса çăлса кăларма шефсем пырассине кĕтети мĕн сирĕн йал халăхĕ.

# Уколовнăй котĕкс стат̆йи.



— Хăш стат̆йа тăрăх айăпларĕç сана?
— Стат̆йа?!.. Стат̆йа тăрăх мар çав, саметкă тăрăх анђах.

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 470 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.